26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943 АПРЕЛЬ 9 ЭРНЕКУН 76(6313) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Чăваш АССР-ĕнче 1943 çулта ялхуçалăх культурисем туса илмелли государство планĕ çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Чăваш АССР-ĕнчи колхозсемпе совхозсенче ялхуçалăх культурисем туса илмелли государство планĕ çинчен постановлени йышăннă.

Çирĕплетнĕ план тăрăх, колхозсен тĕштырă культурисем пухса илмелли çĕр лаптăкĕ 1943 çулта, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 19.912 гектар чухлĕ, техникăллă культурăсем енĕпе — 2.074 гектар чухлĕ, пахча-çимĕç культурисем енĕпе — 352 гектар чухлĕ ӳсмелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ агротехникăллă мероприятисен çакăн пек планне çирĕплетнĕ: тислĕкпе торф 2.300 пин тонна турттармалла, таса çĕртме — 160 пин гектар, кĕрхи çĕртме —230 пин гектар сухаламалла, кĕрхи тырăсемпе çуртырисен калчисене 25 пин гектар çинче апатлантармалла, яровизациленĕ вăрлăхсемпе 100 пин гектар акмалла т. ыт. те.

1943 çулта ялхуçалăх культурисем туса илес тĕлĕшпе çакăн пек план çирĕплетнĕ:

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче тĕштырă культурисем çакăн чухлĕ туса илмелле (гектартан, центнерпа)

РАЙОНСЕМ	Тĕштырăсем кĕрхи тата çурхи	Вăл шутра: Ыраш	Кĕрхи тулă	Çурхи тулă	Сĕлĕ	Урпа	Вир	Хуратул	Пăрçа	Ясмăк	Вика	Чина	Пăри
Улатăр	12,0	13,8	13,0	11,2	12,0	—	9,5	7,5	10,5	9,5	9,0	—	—
Элĕк	11,7	12,8	11,0	11,2	12,5	13,0	8,5	7,5	9,6	9,0	11,0	—	11,0
Вăрнар	13,0	13,8	13,5	12,5	14,0	14,1	9,0	7,8	10,5	9,0	11,0	—	13,5
Йĕпреç	11,7	13,4	12,6	11,8	13,0	12,0	9,8	8,0	10,0	9,0	9,5	—	11,0
Ишлей	11,7	13,2	11,0	10,0	12,0	12,7	—	8,1	9,5	9,0	10,0	9,6	10,5
Калинински	12,6	13,3	12,0	11,2	13,2	13,0	10,0	8,2	9,5	9,0	11,4	9,5	12,0
Канаш	12,0	12,9	11,0	10,7	11,6	13,0	—	7,0	9,0	8,5	9,0	9,0	12,0
Куславкка	12,0	13,0	11,0	10,0	11,0	12,0	8,0	7,5	9,2	8,0	9,5	10,0	9,5
Комсомольски	12,5	13,4	13,0	11,5	12,5	12,5	9,0	7,5	9,5	8,0	9,5	—	11,1
Красноармейски	11,8	13,0	11,8	11,2	12,8	13,1	—	—	10,0	8,5	11,0	9,5	11,1
Хĕрлĕ Чутай	12,7	13,4	11,8	10,2	12,5	13,5	9,5	8,1	9,5	9,0	10,5	—	—
Кувакино	11,3	13,0	12,8	10,2	10,5	—	8,0	7,8	8,5	8,0	9,5	—	—
Сĕнтĕрвăрри	12,1	13,2	12,2	10,2	12,0	12,7	—	7,8	10,0	9,0	10,5	—	—
Октябрьски	11,8	13,0	11,7	10,0	11,8	12,0	—	7,8	9,6	8,0	9,0	9,5	10,0
Первомайски	11,9	13,3	11,8	11,2	11,8	—	9,5	8,0	9,5	9,0	9,5	—	10,2
Пăрачкав	11,8	13,2	12,3	11,2	11,0	—	9,5	7,0	9,0	8,5	9,5	—	—
Советски	12,2	13,2	11,8	11,2	13,0	13,4	9,0	8,0	10,5	10,0	11,0	9,6	11,0
Сĕнтĕр	12,2	13,4	11,3	11,0	13,2	13,2	9,0	8,0	9,7	9,5	11,0	—	12,0
Вăрмар	11,8	12,9	11,8	10,8	11,4	12,9	8,5	7,5	10,0	8,0	9,5	9,5	10,5
Çĕрпӳ	11,8	12,8	11,6	10,8	11,9	12,8	9,5	8,0	10,0	9,0	10,0	9,7	11,0
Шупашкар	12,0	13,3	11,6	11,0	12,0	13,0	9,0	8,7	10,0	9,0	10,0	—	10,2
Чкаловски	12,4	13,6	13,0	11,7	12,4	12,0	9,2	8,5	8,5	8,5	9,0	—	10,7
Шăмăршă	11,8	13,2	12,0	11,4	11,6	—	9,0	8,5	8,0	8,5	9,0	—	11,0
Шăхасан	12,0	13,0	12,2	11,4	12,0	13,5	8,0	8,3	10,0	9,5	9,0	9,6	11,8
Çĕмĕрле	11,9	13,2	12,0	11,0	12,4	13,1	9,8	7,8	8,8	8,5	10,0	—	—
Етĕрне	12,5	13,2	11,8	11,0	12,4	12,9	9,5	8,5	9,0	9,5	10,5	—	—
Елчĕк	12,8	13,8	12,5	12,3	12,6	—	8,0	7,8	9,5	8,5	9,0	—	9,6
Тăвай	12,4	13,3	12,5	11,5	12,4	13,0	8,0	7,8	9,5	8,5	10,0	9,5	12,0
Шупашкар хули	12,0	13,4	13,0	11,5	12,4	—	—	—	9,5	—	10,0	—	—
ЧАССР тăрăх	12,0	13,2	12,0	11,0	12,0	13,0	9,0	8,0	9,5	9,0	10,0	9,5	11,0

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче техникăллă культурăсем çакăн чухлĕ туса илмелле (гектартан, центнерпа)

РАЙОНСЕМ	Йĕтĕн: сӳсĕ	Йĕтĕн: вăрлăхĕ	Кантăр: сӳсĕ	Кантăр: вăрлăхĕ	Махорка	Çĕрулми
Улатăр	3,5	3,3	—	—	14,0	115
Элĕк	—	—	4,1	3,6	—	110
Вăрнар	3,5	3,3	4,3	4,0	15,5	110
Йĕпреç	3,3	3,2	4,0	3,7	14,0	110
Ишлей	—	—	4,1	3,8	14,0	110
Калинински	—	—	4,3	3,9	16,5	105
Канаш	—	—	4,0	3,6	—	110
Куславкка	—	—	4,0	3,8	—	110
Комсомольски	—	—	4,0	3,7	13,5	100
Красноармейски	—	—	4,3	3,9	13,5	100
Хĕрлĕ Чутай	3,5	3,3	4,3	3,9	14,5	105
Кувакино	3,3	3,2	—	—	13,5	105
Сĕнтĕрвăрри	—	—	4,1	3,8	—	100
Октябрьски	—	—	4,2	3,9	—	105
Первомайски	3,3	3,2	4,1	3,7	—	110
Пăрачкав	3,4	3,2	—	—	13,5	100
Советски	—	—	4,0	4,0	—	105
Сĕнтĕр	—	—	4,4	4,0	—	105
Вăрмар	—	—	4,2	3,8	—	110
Çĕрпӳ	—	—	4,1	3,8	13,5	110
Шупашкар	—	—	4,2	3,9	—	110
Чкаловски	—	—	3,8	3,3	—	100
Шăмăршă	3,1	2,8	4,0	3,6	—	105
Шăхасан	—	—	4,2	3,9	—	105
Çĕмĕрле	3,5	3,3	4,3	3,9	13,5	105
Етĕрне	3,5	3,3	4,3	3,9	—	105
Елчĕк	—	—	4,2	3,7	—	100
Тăвай	3,0	2,8	4,2	3,9	13,5	100
Шупашкар хули	—	—	—	—	—	110
ЧАССР тăрăх	3,4	3,2	4,2	3,8	14,0	105

Кок-сагыз енĕпе çакăн пек тума палăртнă: пĕр çулхи плантацисенчен кок-сагыз тымарĕ гектартан — 6 центнер, икĕ çулхи плантацисенчен —8 центнер туса илмелле. Кок-сагыз вăрлăхĕ: пĕр çулхи плантацисенчен гектартан — 3 килограмм, икĕ çулхи плантацисенчен — 20 килограмм туса илмелле.

Сахăр кăшманĕ гектартан 120 центнер туса илме йышăннă.

Пахча-çимĕç культурисемпе выльăх апачĕ валли акăнакан тымар çимĕçсен вăрлăхĕсене çакăн чухлĕ туса илме палăртнă: хăяр вăрлăхĕ гектартан — 0,6 центнер, купăста—1,2 центнер, кишĕр — 1,5 центнер, хĕрлĕ кăшман — 5 центнер, помидор — 0,2 центнер, турнепс — 2 центнер, выльăх-чĕрлĕх кăшманĕ — 5 центнер туса илмелле.

Нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăхĕсене çакăн чухлĕ туса илмелле (гектартан, центнерпа)

Районсем	Клевер	Люцерна	Тимофеевка	Улăх курăксем
Улатăр	1,3	1,0	1,3	—
Элĕк	1,3	—	—	—
Вăрнар	1,5	1,0	1,3	—
Йĕпреç	1,2	—	—	—
Ишлей	1,5	—	—	—
Калинински	1,2	1,0	—	—
Канаш	1,2	1,0	—	—
Куславкка	1,3	—	—	—
Комсомольски	1,5	1,0	1,3	—
Красноармейски	1,0	1,0	—	—
Хĕрлĕ Чутай	1,5	—	—	—
Кувакино	1,1	1,0	—	—
Сĕнтĕрвăрри	1,5	—	—	—
Октябрьски	1,2	—	—	—
Первомайски	1,5	1,0	—	—
Пăрачкав	1,2	—	—	—
Советски	1,2	—	—	—
Сĕнтĕр	1,5	—	—	—
Вăрмар	1,2	1,0	—	—
Çĕрпӳ	1,5	—	—	1,2
Шупашкар	1,1	1,0	—	—
Чкаловски	1,1	1,0	—	—
Шăхасан	1,1	1,0	—	—
Шăмăршă	1,5	—	—	—
Çĕмĕрле	1,5	—	—	—
Етĕрне	1,5	—	—	—
Елчĕк	1,0	1,0	1,3	1,2
Тăвай	1,3	1,0	1,3	—
Шупашкар хули	1,3	—	—	—
ЧАССР тăрăх	1,3	1,0	1,3	1,2

Колхозсенче выльăх апачĕ валли акакан культурăсене çакăн чухлĕ туса илмелле (гектартан, центнерпа)

Районсем	Пĕр çул ӳсекен курăксем	Нумай çул ӳсекен курăксем	Выльăх апачĕ валли акакан тымар-çимĕçсем	Улăх утти
Улатăр	20,0	24,0	150,0	17,0
Элĕк	20,0	22,0	130,0	17,0
Вăрнар	19,0	25,0	160,0	15,0
Йĕпреç	19,0	23,0	140,0	18,0
Ишлей	21,5	24,0	150,0	19,0
Калинински	19,0	21,0	160,0	15,0
Канаш	21,0	23,0	150,0	18,0
Куславкка	17,0	22,0	140,0	18,0
Комсомольски	18,0	21,0	140,0	17,0
Красноармейски	22,0	22,0	140,0	17,0
Хĕрлĕ Чутай	21,0	24,0	160,0	20,0
Кувакино	18,0	24,0	160,0	17,0
Сĕнтĕрвăрри	20,0	21,0	150,0	17,0
Октябрьски	20,0	22,0	150,0	18,0
Первомайски	20,0	23,0	150,0	17,0
Пăрачкав	18,0	22,0	160,0	18,0
Советски	22,0	20,0	140,0	16,0
Сĕнтĕр	22,0	20,0	160,0	16,0
Вăрмар	18,0	23,0	160,0	16,0
Çĕрпӳ	20,0	20,0	160,0	16,0
Шупашкар	20,0	20,0	160,0	16,0
Чкаловски	18,0	21,0	150,0	14,0
Шăмăршă	19,0	22,0	150,0	20,0
Шăхасан	20,0	22,0	150,0	18,0
Çĕмĕрле	20,0	22,0	150,0	19,0
Етĕрне	20,0	23,0	150,0	15,0
Елчĕк	22,0	21,0	150,0	15,0
Тăвай	22,0	21,0	140,0	14,0
Шупашкар хули	18,0	20,0	140,0	16,0
ЧАССР тăрăх	20,0	22,0	150,0	17,0

Колхозсенче пахча-çимĕç культурисем çакăн чухлĕ туса илмелле (гектартан, центнерпа)

РАЙОНСЕМ	Купăста: ирхи	Купăста: вăхăтлă тата каярах юлса пулаканни	Помидорсем	Хăяр	Хĕрлĕ кăшман	Кишĕр	Сухан
Улатăр	130	160	130	130	150	130	100
Элĕк	110	140	110	115	140	130	90
Вăрнар	110	140	120	120	140	125	100
Йĕпреç	120	155	120	120	140	120	100
Ишлей	120	150	120	120	135	110	90
Калинински	110	140	110	120	130	120	100
Канаш	120	160	130	120	140	110	100
Куславкка	110	140	120	115	140	110	80
Комсомольски	110	140	100	100	140	120	80
Красноармейски	120	150	110	110	130	120	70
Хĕрлĕ Чутай	120	150	110	120	140	110	100
Кувакино	130	160	120	120	150	130	90
Сĕнтĕрвăрри	130	150	130	130	140	130	100
Октябрьски	120	150	110	120	130	120	90
Первомайски	120	140	100	120	140	120	90
Пăрачкав	130	160	120	130	150	130	100
Советски	120	150	110	120	130	120	90
Сĕнтĕр	130	150	120	120	140	120	90
Вăрмар	120	150	120	125	150	120	80
Çĕрпӳ	130	160	130	130	150	130	90
Шупашкар	120	150	120	120	140	130	90
Чкаловски	110	140	120	110	140	110	80
Шăмăршă	110	140	100	100	130	110	70
Шăхасан	120	150	130	120	140	120	90
Çĕмĕрле	120	150	130	130	140	120	90
Етĕрне	130	160	130	130	140	120	90
Елчĕк	110	150	110	110	130	110	80
Тăвай	120	160	120	120	140	110	90
Шупашкар хули	120	150	130	120	140	120	100
ЧАССР тăрăх	120	150	120	120	140	120	90

Кунсăр пуçне хӳтĕ тăпра çинче акса тăвакан пахча-çимĕçсем çакăн чухлĕ туса илме палăртнă: парниксенчен кашни рамăран 0,1 центнер, теплицăн кашни тăваткал метрĕнчен —0,12 центнер пахча-çимĕç туса илмелле.

Çырла-çимĕçсем гектартан 18 центнер, хăмла-çырли: икĕ çулхи хăмла вырăнĕнчен—2 центнер, виçĕ çулхинчен—4 центнер, тăватă çулхинчен — 6 центнер, пилĕк çулхинчен — 8 центнер, ултă çулхинчен—9 центнер хăмла илмелле.

Парниксем — 22 пин рамăлăх, теплицăсем — 1.200 тăваткал метрлăх, сад-пахчисем — 1.200 гектар, çырла-çимĕç пахчисем — 330 гектар хывма палăртса çирĕплетнĕ.

Çураки тапхăрĕнче кашни ĕçлекен лаша пуçне, пĕтĕм ĕçе суха çине куçарса шутласан, çакăн чухлĕ ĕç тивет: **8-шар гектар** — Улатăр, Комсомольски, Кувакино, Вăрмар, Чкаловски, Елчĕк, Тăвай, Пăрачкав районĕсем тăрăх; **7-шер гектар** — Элĕк, Ишлей, Йĕпреç, Канаш, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Çĕрпӳ, Шăмăршă, Шăхасан районĕсем тăрăх; **6-шар гектар** — Вăрнар, Калинино, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Советски, Сĕнтĕр, Шупашкар, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсем тăрăх.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене тырпул туса илмелли плана колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем патне 5 кунлăх срокра çитерме, çав плана колхозниксен, МТС-семпе совхозсенчи работниксен пĕрлехи пухăвĕсенче, партипе комсомолăн ялсенчи пуçламĕш организацийĕсен пухăвĕнче сӳтсе-явма тата ăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма хушнă.

Вăрмансене пушартан сыхласси

ЧАССР Совнаркомĕ вăрмансене пушартан сыхлас пирки постановлени йышăннă.

Çав постановлени тăрăх вăрмана пушартан сыхлассишĕн лесхозсем, вăрман лартса ӳстерес тата вăрмана сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Управленисем, колхозсен çĕрĕ çинче—колхоз председателĕсем, çар чаçĕсем тăракан çĕрте — çав чаçсен командованийĕсем, вăрман касакан çĕрте — вăрман касакан, унпа усă куракан организацисем ответлă пулса тăраççĕ.

Пушар хыпса илес хăрушлăхран сыхланас енĕпе çӳлте асăннă учрежденисен руководителĕсене 1943 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне вăрмансене пĕлтĕр е кăçал каснă хыççăн сапаланса выртакан йывăç юлашкийĕсене пуçтарса çунтарса ярса тасатма хушнă. Çав вăхăт тĕлнех хăма çуракан заводсем вырнаçнă, çар чаçĕсем тăракан, яланлăх е вăхăтлăх складсем вырнаçнă вăрмансене çӳп-çапсенчен тасатса çитермелле.

Хыр-чăрăш вăрманĕсенче тата хыр-чăрăшсемпе хутăш вăрмансенче пушар тухассинчен сыхланас енĕпе çак çулхи апрелĕн 25-мĕшĕпе октябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче каснă хыççăн юлакан туратсене пушар тухассинчен сыхланмалли мерăсене тумасăр çунтарма, вăрманта вут чĕртме, табак туртма чармалла. Çавăн пекех рабочисене пушара сӳнтермелли хатĕрсем памасăр смала юхтарма, кăмрăк тума, тракторсене, автомашинăсене вăрманта ĕçлеттерме, паровозсене хĕлхем тытмалли хатĕрсĕр вăрман витĕр тухма чармалла тунă.

Пушара сӳнтерме кирлĕ пулсан, вырăнти советсен вăрмана çынсем мобилизацилесе ямалла.

Вăрман пушарĕсемпе кĕрешес ĕçе ертсе пыма республикăри комисси тунă.

Районсенчи тата хуласенчи ĕççынни депутачĕсен исполкомĕсене вăрманти пушарсемпе кĕрешес пирки постановленисем йышăнма тата пушарсемпе кĕрешекен тройкăсем тума хушнă.

Колхоз фермисем лайăх ĕçлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. („Чăваш Коммуни" корр.) Хусакасси колхозăн фермăсем нумай, унта тăватă тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх çулсеренех йышланса пырать. Юлашки çулсенче выльăхсен тухăçлăхĕ те палăрмаллах ӳсрĕ. Çамрăк выльăхсем лайăх ӳссе пыраççĕ. Фермăсенче ĕç епле пынине, выльăхсем епле ĕрчесе пынине кунта колхозри ветфельдшер П. Ефимов юлташ сăнаса тăрать. Дояркăсене, свинаркăсене, конюхсене выльăха мĕнле пăхмалли çинчен тăтăшах вĕрентсе, вĕсен пĕтĕм ĕçне зоотехника правилисем тăрăх йĕркелесе пырать.

Ĕнесене, тĕслĕхрен, кунта рацион тăрăх тăрантараççĕ: ирхине ыраш улăмĕ, ун хыççăн çуса туранă çĕрулми, кăнтăрла клевер тата сĕлĕ улăмĕ ĕне пуçне 20-шер килограмм çити параççĕ. Вăхăтра лайăх пăхса тутă тăрантарнипе фермăри ĕнесем сĕт нумай хушрĕç.

Сысна фермăнче ĕç епле те ăнăçлăн пулса пыман. Ама сыснасем 3—4-шер çурă çеç тунă. Çакна П. Ефимов сăнаса пынă, кирлĕ мерăсем йышăннă. Халĕ сысна ферми пысăк тупăш панипе пур колхозниксем те савăнаççĕ. Сыснасене пăхас ĕç фермăра пачах çĕнелчĕ, кашни амана хăйне уйрăм пăхса усрасси ĕç йĕркине кĕчĕ. Çапла тунипе кашни ама сысна халь 12—13-шер çурă тăвать. Иртнĕ çулта сысна çурисене пурне те лайăх пăхса илнĕ. Колхоз фронтовиксен çемьисене 40 сысна çури парса пулăшнă тата ытти колхозсене 140 пуç сутнă. Государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмĕшпех парса татнă.

Ефимов юлташ хăйĕн колхозĕнче çеç мар, ытти колхозсене те вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшать, выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетмелли майсене вĕрентет. Кашни выльăха фронт валли упраса ӳстерме сĕнет.

С. Шадин.

Колхозсем çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслетпĕр

Ревизорсен вырăнĕнче

ÇĔМĔРЛЕ, апрелĕн 8-мĕш. (Хамăр корр., телефонпа). Районри чылай колхозсен председателĕсем вăрлăх хатĕрлес ыйтăва такам татса парасса шанса лараççĕ. Райçĕрĕç пайĕнчи тата райсовет исполкомĕнчи руководительсене те чылай колхозсен вăрлăх çитменни хускантармасть.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хăшпĕр колхозсенче пысăк çитменлĕхсем пур. Анчах тĕрĕслӳ комиссийĕсем чылайĕшĕ çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумарĕç. Тĕслĕхрен, Мăн Улхашри «Красноармеец» колхоз çуракине мĕнле хатĕрленнине пăхса тухса комисси пысăк çитменлĕхсем палăртрĕ. «Красноармеец» колхоз районра чи пысăкки шутланать. Кăçал ку колхозăн 1.126 гектар çине çурхи тырăсем акса хăвармалла. Акма 1.170 центнер таран вăрлăх кирлĕ. Анчах колхозăн çакăн чухлĕ вăрлăх çук. Çĕрулми 680 центнер кирлĕ, халĕ 113 центнер çеç хатĕрлесе хунă. Çĕрулми вăрлăхĕ çитмест пулсан та колхоз правленийĕ ку тĕлĕшпе нимĕн те туман, çимелли çĕрулмирен тăррисене касса хăварас ĕçе пачах тытăнман. Колхоз кăçал 8 гектар махорка, 4 гектар тымар-çимĕç, 12 гектар пахча-çимĕç лартса тумалла. Анчах махорка, пахча-çимĕç вăрлăхĕсем пачах çук.

Колхозра çакăн пек пысăк çитменлĕхсем курнă пулсан та, комисси ĕçе тӳрлетес енĕпе нимĕн те туман. Тĕрĕслӳ комиссине кунта райсовет исполкомĕн председателĕ Носков юлташ ертсе пынă.

«Çак çитменлĕхсене апрелĕн 10-мĕшчен пĕтĕмĕшпех пĕтерме хушас» тесе çырнă комисси тĕрĕслӳ акчĕ çине. Носков юлташ çакăнпа вара хăй ертсе пыракан комиссин ĕçне вĕçленĕ.

«Красноармеец» колхозăн паян кун та çав-çавах вăрлăх çук. Колхоз председателĕ халĕ те нимĕн те тумасть. Вăрлăх уйăрса çитерес ыйтăва вирлĕн лартмасть.

«Красноармеец» колхозăн çуракине хатĕрленес тĕлĕшре ытти çитменлĕхсем те нумай. Ĕçлеме пултаракан 120 лаша валли пурĕ те 45 урапа çеç, 16 сеялка анчах; вĕсенчен пĕри те юсавлă мар, газогенераторлă тракторсене валли чурка хатĕрлемен. Çураки ĕçĕсен планне туман, ĕç вăйне шута илсе вырнаçтарса тухман. Çапла пулин те райсовет исполкомĕн председателĕ Носков колхоза татăклă пулăшу пама тăрăшман.

Ытти çĕрте те хăшпĕр комиссисем колхозсенчи çитменлĕхсене шута илсе çеç тухрĕç. Хăшпĕр колхоз председателĕсем «çуракине тухма тахçанах хатĕр» тесе суя сведенисем те пană.

Храмов председатель пулса ĕçлекен Сталин ячĕпе тăракан колхоз, райçĕрĕç пайĕнчи сведенисем тăрăх, çуракине тухма тахçанах хатĕр. Çапла, ку колхозра та комисси пулчĕ. Комиссие райсовет исполкомĕн председателĕн заместителĕ Хренов юлташ ертсе пычĕ. Тĕрĕслесе тухнă хыççăн пысăк çитменлĕхсем курăнчĕç. Сталин ячĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕр мар. Йĕтĕн вăрлăхĕ 10 центнер кирлĕ, 1,70 центнер çеç, кантăрвăрри 2,8 центнер, вика 8,75 центнер çитмеççĕ. Ялхуçалăх машинисем суха тума хатĕр мар. Икĕ касăллă 6 плугран пĕрине те юсаман тата ыт. те.

Çĕмĕрле районĕнчи чылай колхозсем çуракине тухма хатĕр мар. Райçĕрĕç пайĕ, райсовет исполкомĕ тата МТС политотделĕ çак ответлă ĕçре колхозсене кирлĕ пек ертсе пымаççĕ.

Х. Лисин.

Çитменлĕхсене пĕтерне

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Юманай ялсоветне кĕрекен «Коминтерн» колхозра (председателĕ Гаврилов юлташ) çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕсленĕ хыççăн пысăк çитменлĕхсем пурри палăрчĕ. Уйрăмах колхоз плугсене хатĕрлесе çитермен, михĕсем те хатĕрлемен, акмалли вăрлăхсене сортласа çитермен, вĕсем кондицие лармаççĕ.

Тĕрĕслӳ комиссийĕ колхоз правленине палăртнă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме хушрĕ. Çакăн хыççăн колхоз правлени членĕсем, бригадирсемпе колхоз активисчĕсем çине тăрса ĕçлесе, пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Халĕ колхоз çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ. Акмалли вăрлăхсене тепĕр хут сортласа хатĕрленĕ. Тулă вăрлăхĕ малтан акма юрăхсăр пулнă, халĕ ăна 12 гектар валли 40 центнер суйласа тасатнă, вăл вăрлăх кондицине ларать. Çавăн пекех сĕлĕ вăрлăхне те 200 центнер лайăх сортласа хатĕрлерĕç. Ытти вăрлăхсем те акма хатĕр.

Тĕрĕслӳ комиссийĕ плугсем ĕçе хатĕр маррине палăртнă хыççăн 48 плуг юсаса хатĕрленĕ, 38 сӳре, 70 михĕ хатĕрлесе хунă.

Колхозăн лашасем çителĕклĕ. Вĕсем валли 400 центнер апат уйăрса хунă. Колхоз ĕнесемпе вăкăрсене кӳлме вĕрентет. Халĕ «Веток» ятлă вăкăра кӳлме вĕрентнĕ. Çураки вăхăтĕнче çак вăкăрпа уя вăрлăх турттарма шутлаççĕ.

Колхоз çураки планне те туса çитерчĕ, вăл плана колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явса çирĕплетнĕ. Колхозра ĕçе пĕр чарăнусăр туса пырас майпа колхозниксем валли столовăй уçаççĕ. Продуктсене хатĕрлесе çитернĕ, пăрça, какай, тулă çăнăхĕ, сĕт-çу уйăрса хунă. Колхозницăсен ачисем валли ясли пулать.

Çĕр типсе пынине сăнаса тăракан комисси членĕсем кашни кунах уйхирте пулаççĕ. Çĕр акма юрăхлине тĕрĕслеççĕ.

Ф. Романов,
ВКП(б) Калинински райкомĕн секретарĕ.

Тĕрĕслӳ мĕн кăтартрĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Албахтинăри «Партизан» колхоз çуракине тухма халĕ те хатĕрленсе çитмен-ха. Нумаях пулмасть колхозра çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине тĕрĕслерĕç. Тĕрĕслӳре колхозăн пысăк çитменлĕхĕсем курăнчĕç. Колхозри виççĕмĕш бригада паян кунччченех урпа, пăри, сĕлĕ вăрлăхĕсене сортласа пĕтермен. Колхозăн кăçал та клевер чылай акса хăвармалла. Апла пулин те иртнĕ çулхи 15 гектар клевера халь те çапса пĕтермен. Вăрлăхсем сорт тĕлĕшĕнчен начар, çӳп-çапллă. Вĕсене тепĕр хут сортлама тивет. Пăрса вăрлăхĕ тасалăх тĕлĕшĕнчен питĕ начар, вăрлăх çинче хурт çинĕ пăрçасем нумай, ăна алăпа пĕрчĕн сортламалла.

Колхозăн çитменлĕхсем татах та нумай. Производствăллă ĕç планĕ туман, колхозри ĕç вăйне шута илсе, колхозниксене уйрăм ĕçсем тăрăх çирĕплетмен. Начарланнă лашасене (ун пеккисем 12) лайăх апат сине тăратма шутламаççĕ. Хăмăтĕнерчĕк тата вĕсен пăявĕсем çителĕксĕр. Кашни бригадăра 2—3 хăмăт çеç. Урапасем ăста килчĕ унта сапаланса выртаççĕ. Лашасемпе усă курас ĕçре обезличка: лашасене колхозниксем бригадирсенчен е старши конюхран ыйтмасăрах кирлĕ-кирлĕ мар çĕре кӳлсе каяççĕ.

Колхозра çакăн пек çитменлĕхсем татах та пур. Апла пулин те вĕсене çийĕнчех пĕтерсе пырассишĕн колхоз правленийĕн членĕсем тăрăшмаççĕ. Колхоз председателĕ И. Осипов юлташ пĕтĕм ĕçе хăй пĕччен тума пăхать, анчах та вăй çитереймест. Вăл ялсовет председателĕпе, ялсовет депутачĕсемпе тата ялти интеллигенципе çыхăнса ĕçлемест. Вĕсене колхозăн ĕçне явăçтармасть. Çавна пула ĕнтĕ колхозра политикăллă-массăллă ĕç начар вырăнта тăрать. Ялта туллимар вăтам шкул, почта, фельдшер пункчĕ пур. Вĕсенче пултаруллă çынсем ĕçлеççĕ. Вĕсем те колхозăн çитменлĕхĕсене курса тăраççĕ, анчах вăл çитменлĕхсене пĕтерессишĕн пурте пĕрле тытăнса ĕçлекенсем çук.

Колхоз председателĕ Осипов юлташ бригадирсене кашни кунах наряд паратъ. Çав нарядсене бригадирсем чылайĕшĕ пурнăçламаççĕ. Çакă ĕнтĕ вăл колхозра ĕç дисциплини япăхнине пĕлтерет.

«Партизан» колхозăн çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пур майсем те çителĕклех. Колхоз председателĕн хăйĕн ĕçне çирĕпрех туса пыни, пуринчен ытла колхоз ĕçне актива, ялти интеллигенцие явăçтарни кирлĕ.

Районри çĕрĕç пайĕн, партипе совет организацийĕсен начар ĕçлекен колхозсене пулăшассине вăйлатмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 6-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 6-мĕшĕнче фронтсенче пăлтă улшăнусемех пулман.

* * *

Апрелĕн 5-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин тата минометсен 7 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕтсе янă тата тăшманăн поездне çĕмĕрнĕ.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра тăшман пирĕн позицисене темиçе хут та атакăланă. Пирĕн чаçсем оборонăра тăрса вăйлă çапăçса, нимĕçсене халтан янă, унтан вара контратака тунă та тăшмана пĕр меллĕ рубежран хĕссе кăларнă. 400 гилеровеца çити вĕлернĕ, нимĕçсен 6 танкне персе çĕмĕрнĕ, 5 оруди тата 15 автомашина пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллери нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ, 4 орудине тата темиçе пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă позицисене тĕреклетнĕ тата çапăçса разведка тунă. Пирĕн пехотăпа артиллери нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити тата тĕрлĕ грузсем тиенĕ 25 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçура тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Чугуев районĕнче тăшманăн пĕр полк таран пехоти 20 танк пулăшса пынипе пирĕн пĕр чаçăн подразделенине хирĕç наступлени пуçласа янă. Пирĕн артиллери гитлеровецсен атакине сирсе янă. Кăнтăрла иртсен тăшман хăйĕн резервĕсене илсе пынă та пирĕн позицие тепĕр хут атакăланă. Пысăк çухатусем тӳссе, нимĕçсем пĕр участокра пирĕн подразделенисене пăртак чакарнă. Каçалапа пирĕн боецсем контратака тунă та хăйсен позицийĕсене каялла туртса илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕç пехотин пĕр ротине ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата тăшманăн 3 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Кубань çинче пирĕн разведка тăвакан отряд халăх пурăнакан пункта, тăшман йышăннăскере, çĕмĕрсе кĕнĕ. Урамри хаяр çапăçура пирĕн боецсем 100 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтерсе, çав пункта йышăнса илнĕ, 2 оруди, 11 пулемет, радиостанци тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Пинск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен 2 полици участокне аркатса тăкнă. 100 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Тăшмантан трофейăсем тата секретлă документсем тытса илнĕ. Пинск облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсен çар эшелонне крушени тунă. Крушение пула паровоз тата темиçе вагон çĕмĕрĕлнĕ. Тăрса юлнă 20 вагон çине партизансем пăшалсемпе пулеметсенчен пенĕ. Хире-хирĕç персе тăнă чухне нимĕçсен чугунçул çинче ĕçлекен 60 чиновникне вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Подмошье ялне тустарса çаратса пĕтернĕ. Гитлеровецсем хĕрарăмсене те, ачасене те шеллесе тăман. Ялта гитлерла çын вĕлеренсенчен асап курман çемье пĕрре те çук. Анна Конюхова учительницăна бандитсем вăл хăйне пусмăрлама хăтланнă нимĕçе хирĕç тăнăшăн персе вĕлернĕ. Пуçкасакансем мирлĕ çынсене — Михаил Степаненкăна, Александр Степаненкăна, Борис Барсуковпа унăн хĕрне, Василий Феоктистова, 12 çулхи ачасене — Алексей Игнатова тата Дмитрий Иванова асаплантарса вĕлернĕ. Нимĕçсем 85 çулхи старике Кожурова тата унăн арăмне тискеррĕн асаплантарнă. Допросра нимĕçсем партизансем ăçта тăнине кăтартма ыйтса, вĕсене хĕнесе пĕтернĕ. Совет патриочĕсем пур асапсене те чăтăмлăн тӳссе ирттернĕ, пысăк асап курса вилнĕ, анчах та, партизансене тата вĕсемпе çыхăнса тăракан ял çыннисене тытса паман.

* * *

Роттердам районĕнче Голланди патриочĕсем нимĕçсен нефть турттаракан суднине вут тĕртнĕ. Амстердамра голландецсен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен рабочисене Германие ăсатакан центральнăй бюровĕн çуртне сирпĕнтернĕ. Мĕнпур документсене, çавăн пекех тата Германири каторгăна вăйпа яма палăртса хунă голландецсен списокĕсене пĕтерсе тăкнă. Колховен сывăхĕнчи çар завотĕнче васкавлă çар заказĕ илсен рабочисем пĕтĕм продукцие пăсса, брак çеç туса кăларнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем йышăннă рубежсене çирĕплетсе тăнă. Артиллерирен, минометсенчен тата пулеметсенчен персе нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 4 орудине çĕмĕрнĕ. Пĕр участокра нимĕç автоматчикĕсен роти пирĕн оборона йĕркине тĕпчесе пĕлесшĕн пулнă. Кĕске çапăçу хыççăн гитлеровецсене каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе вуншар вилли выртса юлнă.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пĕр чаçăн боецĕсем тăшмана халăх пурăнакан 2 пунктран хĕссе кăларнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра нимĕçсем пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă, анчах вĕсене пăшалсемпе пулеметсенчен персе сапаласа янă. Чиннов юлташ ертсе пыракан пĕр чаçри артиллеристсем нимĕçсем тăракан вырăна вирлĕн пеме пуçланă. Темиçе дзота аркатнă тата тăшманăн миномет батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белгород районĕнче пытарса тăратнă тăшман орудийĕсем пирĕн çинелле персе тăнă. Кĕçĕн сержант Белых тата Горелов, Вдовин, Каретин, Тропин, Солощенко, Земляниченко красноармеецсем хăйсемпе пĕрле телефон илсе нимĕçсен тылне вăрттăн пырса кĕнĕ те тăшман батарейисем тăнă вырăна тупнă. Разведчиксем нимĕç артиллерисчĕсем тăнă çурта хупăрласа илсе часовойне вĕлернĕ. Ун хыççăн пӳрте кĕрсе кайса 20 гитлеровеца вĕлерсе тăкнă. Телефонпа чĕннипе пырса çитнĕ совет танкĕсем тăшманăн 9 орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен отрячĕсем ăнăçлăн кĕрешни нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтĕ хăратнă. Нимĕç войскисен çурçĕр-хĕвелтухăç группировкин тылне хураллакан войскăсен командующийĕ генерал-майор Шпейман партизансене хирĕç карательнăй пысăк экспедици янă. Мартăн 20-мĕшĕнче нимĕç войскисем Ленинград партизанĕсене хирĕç анлă операцисем пуçласа янă. Совет патриочĕсем, йышлăрах тăшманпа тӳрремĕнех тĕл пулса çапăçассинчен пăрăнса, гитлеровецсен тылĕпе флангĕсене пĕрмаях пыра-пыра тапăннă. Туллимар даннăйсем тăрăх, темиçе кун хушши пулнă çапăçусенче партизансем 1.000 ытла нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 8 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче пулеметсем, винтовкăсем тата боеприпассем нумай.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Палкино ялĕнче çав тери тискер ĕçсем тунă. Ялти 30 хĕрарăма тата ачасене гитлеровецсем 3 çурта хăваласа хупнă та çунтарса янă. Вутра Александра Фомина тата унăн тăватă хĕрĕ, 4 çултан пуçласа 9 çула çитнĕскерсем, Анастасия Васильева тата унăн икĕ хĕрĕ, Екатерина Гытина тата унăн кăкăр ачи тата ыттисем те çунса кайнă. Нимĕç бандичĕсем ялта колхозниксен пӳрт-çурчĕсене çунтарса янă.

* * *

Париж районĕнче (Франция) армирен тарнă нумай нимĕç салтакĕсем пытанса пурăнаççĕ. Совет Союзĕпе Германи фронтне ярасси çинчен пĕлсенех вĕсем тарнă. Эсэсовецсен тата жандармсен ятарласа тунă отрячĕсем кунĕн-çĕрĕн çав таркăнсем хыççăн хăвалаççĕ. Март уйăхĕн вĕçĕнче Парижра тата унăн сывăхĕнче 300 таркăна яхăн тытнă. Генерал фон Рундштедт приказĕ тăрăх хăйсен чаçĕсенчен тарнă 90 нимĕç салтакне персе пăрахнă.

Апрелĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 7-мĕшĕнче фронтсенче пăлтă улшăнусемех пулман.

* * *

Апрелĕн 6-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 30 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕтнĕ, артиллерипе минометсен 10 батарейине пусарнă.

* * *

Изюм районĕнче пирĕн чаçсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетнĕ. Юлашки кунсенче фронтăн çав участокĕнче тăшман ăнăçсăр атакăланипе пысăк çухатусем тӳснĕ, çавăнпа çав кун хастарлăхне палăртман. Пĕр чаçăн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем тăшманăн 3 дзотне, грузсем турттарса пыракан 8 автомашинине пĕтерсе тăкнă, минометсен батарейине пусарнă тата нимĕçсен пĕр пехотине сапаласа янă.

Драмкружок Хĕрлĕ Çара пулăшать

ОКТЯБРЬСКОЕ. Çак кунсенче Октябрьскинчи вăтам шкул çумĕнчи драмкружок «Анисса» пьесăна лартса пачĕ. Пухăннă 987 тенкĕ укçана боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума пачĕ. Драмкружок ытти ялсенче пьеса лартса пухнă укçана та самолетсен эскадрильине тума парать.

Ф. Медяков.

Ирĕке тухнă районсене пулăшма пахча-çимĕç вăрлăхĕсем пухаççĕ

ИШЛЕЙ. Тăрăн ялсоветĕнчи «Çĕнĕ пурнăç» колхоз членĕсем нимĕç оккупанчĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсем валли пахча-çимĕç вăрлăхĕсем пухаççĕ. Колхозница Матрена Андреева 200 грамм хĕрлĕ кăшман, 100-шер грамм махорка тата чĕкĕнтĕр вăрлăхĕ пачĕ. Ытти колхозницăсем те нимĕç захватчикĕсен тискер пусмăрĕнче пулнă колхозсене тăванла пулăшма кăмăл туса пахча-çимĕç вăрлăхĕсене чылай пачĕç. Пухнă вăрлăха вĕсем посылкăпа яраççĕ.

М. Галкина.

Фронтовиксен çемьисене пулăшу пачĕç

КАНАШ. Катекри Киров ячĕпе тăракан колхоз Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене тата эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çемьесене 10 хуçалăха пĕрер сысна çури, 85 хуçалăха 3—4-шар пăт тыра парса пулăшрĕ.

Т. Владимиров.

Ют çĕршывсенче

Тунисри вăрçă ĕçĕсем

8-МĔШ АРМИН НАСТУПЛЕНИЙĔ ÇИНЧЕН ЧЕРЧИЛЛЬ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕше. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин премьер-министрĕ Черчилль общинăсен палатинче 8-мĕш армин çĕнĕ çĕнтерĕвĕ синчен пĕлтернĕ.

«Эпĕ, — тенĕ Черчилль, — Тунисри хĕçпăшаллă вăйсен Верховнăй командованин докладне илтĕм. Унта пушхирти çар çĕнĕ çĕнтерӳ туни çинчен каланă. Апрелĕн 6-мĕшĕнче 4 сехет те 30 минутăра, ирхине, пач тĕттĕм вăхăтра, генерал Монтгомери хăйĕн тĕп вăйĕсене тăшманăн Габесран çурçĕртерехри Акарит позицийĕсене штурмлама приказ панă. Англипе Инди пехотин дивизийĕсем наступлени пуçлачче малтан 500 орудирен персе тăнă. Артиллерирен персе тăни Эль-Аламейн патĕнчи пекех çав тери вăйлă пулнă. Пач тĕттĕмре çавăн пек пырса тапăнассине тăшман кĕтмен пулмалла. Унăн тĕреклетнĕ позицийĕсене çĕмĕрсе тăкнă, пуç пулса тăракан пур пунктсем те пирĕн алла куçнă. Тăшманăн 12 миля тăршшĕ оборона линине варринчен шăтарса татнă, пирĕн бронетанковăй вăйсене çав хушăка кĕрсе кайма приказ панă. Тĕттĕм пулса çитнĕ çĕре Англи войскисем уçă вырăна пырса çитнĕ. Халлĕхе 6 пин çынна тыткăна илнĕ. Роммель армийĕ ĕнтĕ çурçĕрелле чакать, пирĕн чаçсем вĕсене çине тăрсах хăваласа пыраççĕ. Çак ăнăçлă çапăçу тата тӳрремĕнех пырса çапни пушхир армине Америка войскисемпе пĕрлешме май памалла, американецсем тăшмана хĕвеланăç енчен пĕрмаях хĕссе пыраççĕ. Тунис фронтĕнчи арми группин пур операцийĕсене те генерал Александер пурнăçа кĕртнĕ, вăл ĕçе союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховнăй командованин главнокомандующийĕ генерал Эйзенхауэр ертсе пынă».

Черчилль сăмахне палата тăвăллăн алă çупса йышăннă.

АНГЛИПЕ АМЕРИКĂН ТУНИСРИ ВОЙСКИСЕМ ПĔРЛЕШНĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕн пĕлтерĕвне парать. Унта çапла каланă: Англипе Америкăн Тунисри войскисем пĕрлешрĕç, тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ АНТВЕРПЕНА, НЕАПОЛЕ ТАТА ПАЛЕРМОНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, паян кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Антверпенри тĕрлĕ çар объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Тăшман истребителĕсем хирĕç тăрса вăйлăн çапăçнă. Апла пулин те бомбăсем пăрахасси ăнăçлăн пулса иртнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн нумай самолетне пĕтерсе тăкнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 4-мĕшĕнче каçхине союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем Неаполь çине вĕçсе пырса çĕнĕрен тапăннă. Апрелĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Палермори çар объекчĕсене атакăланă. Союзниксен самолечĕсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

БОЛИВИЯ ТĔНĔЛ ДЕРЖАВИСЕНЕ ХИРĔÇ ВĂРÇĂ ПУÇЛАНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Боливи правительстви апрелĕн 7-мĕшĕнчи кăнтăрларан пуçласа тĕнĕл держависене хирĕç вăрçă пуçласа яни çинчен пĕлтернĕ.

США-ри поляксен прогрессивнăй организацийĕсем Польша реакционерĕсене сивлеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). США-ри реакциллĕ ушкăнсем Совет Союзне хирĕçле пропаганда сарнă вăхăтра, поляксен прогрессивнăй организацийĕсем Сикорские Совет Союзĕпе туслă пулмалли политика çине куçма чĕнеççĕ. Польша профсоюзĕсен комитечĕ профсоюзсен пăллă деятелĕсен ушкăнĕн заявленине пичетленĕ, унта Матушевскин реакциллĕ ушкăнĕн ĕçне сивленĕ. Вăрçăчченхи чикке сыхласа хăварас текен Польша требованийĕсем пĕрлешӳллĕ нацисен пĕрлĕхне сиен тăваççĕ, тесе, заявлени авторĕсем Совет Союзĕпе Польша тата Совет Союзĕпе Америка хушшинчи çыхăнусене çирĕплетме чĕнеççĕ. «Польшăна тепĕр хут тӳса хурасси кӳршĕри славянсемпе, пуринчен ытла Совет Союзĕпе мирлĕ çыхăнусем тытса пырсан çеç пулма пултарать, — тенĕ çав заявленире. — Совет Союзĕпе хирĕçни демократиллĕ вăйсене хавшатать, фашистсене пулăшать. Организациленнĕ рабочисем Америкăра пурăнакан поляксене Матушевские пулăшу партарас тенине пур майсемпе те хирĕç тăраççĕ». Гитлера 1943 çулта аркатса тăкас шутпа Европăна халех çĕмĕрсе кĕме кирлĕ тенĕ заявленире.

Заявлени çине автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн тĕрлĕ отделенийĕсен руководителĕсем — Касправич, Даниловский, Поплавский, муниципальнăй служащисен профсоюзĕсен представителĕ Ставский т. ыт. те алă пуснă.

Америкăри поляксен пăллă икĕ представителĕ — Чикаго университечĕн профессорĕ Ланге тата Мичиган штатĕнчи университет профессорĕ Карпинский те çавăн пекех поляксен реакциллĕ элеменчĕсен Совет Союзне хирĕсле ĕçĕсене сивленĕ.

Поляк чĕлхипе тухакан «Гвязда Поларна» хаçатра пичетленнĕ хăйĕн статьинче профессор Ланге çапла каланă: поляксен реакциллĕ эмиграцийĕ Совет Союзĕ пирки йышăннă позици «напи хăйне хăй вĕлерни» пекех пулса тăрать, мĕншĕн тесен вăл позици Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнура пĕрне-пĕри çирĕп ăнланассине чăрмантарать. Кунсăр пуçне вăл позици Польшăпа Чехословаки хушшинчи пĕрлĕхе аркатать. Çавăн пек позици, тет Ланге, Польшăна пĕр пĕччен тăратса хăварма пултарать. Вăрçă пĕтнĕ хыççăн Хĕвелтухăç Европăпа Вăтам Европăра Совет Союзĕ пуç пулса тăракан держава пулса тăрассине Польша курмасăр тăма пултараймасть. Америкăра пурăнакан поляксене Ланге Совет Союзне хирĕçле санитари кордонĕ тума хăтланнине пулăшассинчен пăрăнма кирли çинчен пĕлтерет.

Реакциллĕ Польша эмигранчĕсем Совет Союзне хирĕç ĕçлеме хăтланнине пĕтерсе хумашкăн автор Польша правительствине мĕн кирлине пĕтĕмпех тума чĕнет.

Профессор Карпинский те çавăн пекех «США-па Совет Союзĕ тата Англипе Совет Союзĕ хушшинче Польша чиккисем пирки харкашу кăларма хăтланакан» элементсене, Совет Союзне хирĕçле элементсене питлет. Карпинский çакна асăрхаттарать: икĕ миллион ытла поляк, вăл шутра Польшăри çĕршер пин еврей, Совет Союзĕ аллинче пулнă пирки çеç чĕрĕ юлма пултарчĕç, тет.

Тӳрлетни

«Чăваш Коммуни» хаçатăн 75-мĕш номерĕнче Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтерĕвĕн вĕçне çапла тӳрлетсе вуламалла:

«Вĕсем СССР халăхĕсене хирĕç хăйсем тунă нихăçанхи пек мар тискер ĕçсемпе преступленисемшĕн хаяр ответ тытма тата пысăк наказани илме тивĕçлĕ».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Вырăнти тата кооператив промышленноçĕнче Май уйăхĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарар

Чăваш республикинчи вырăнти тата кооперации промышленноçĕ 1943 çулхи пĕрремĕш квартал планне ытлашшипех тултарчĕ (вырăнти промышленность — 125,1 процент, кооперации промышленноçĕ — 108 процент тултарнă). Ялан кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе пĕрремĕш квартал планне вырăнти промышленность 107 процент, кооперации промышленноçĕ 124 процент тултарнă.

Çаксем ĕнтĕ юлашки вăхăтра вырăнти тата кооперации промышленноçĕсен ĕçĕ пăртак лайăхланнине кăтартса параççĕ. Райпромкомбинатсен ĕçĕ лайăхланчĕ. Сăмахран, республикăри 29 райпромкомбинатран 1942 çулхи декабрьте 9 райпромкомбинат çеç плана тултарнă пулсан, январьте 13 райпромкомбинат, февральте — 24, мартра — 25 райпромкомбинат плана тултарнă. Шăмăршă райпромкомбиначĕ 1942 çулта уйăхран уйăха плана тултарайман пулсан, 1943 çулхи пĕрремĕш кварталта плана 141 процента çити тултарнă. 1942 çулхи декабрьте тата 1943 çулхи пĕрремĕш кварталта Сĕнтĕрвăрри райпромкомбиначĕ лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Вăл Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне икĕ хут илме тивĕçлĕ пулчĕ, виççĕмĕш Хĕрлĕ ялава Всекоопинсоюзран илчĕ.

Ытти хăшпĕр районсенче те вырăнти промышленность предприятисене тата артельсене ертсе пырас ĕç лайăхланчĕ. Сăмахран, Шăхасан районĕнче (райсовет исполкомĕн председателĕ Скворцов юлташ), Çĕмĕрле районĕнче (райсовет исполкомĕн председателĕ Носков юлташ), Канаш хулинче (хула совет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташ), Улатăр хулинче (хула совет исполкомĕн председателĕ Поляков юлташ) çак ĕç чылай лайăхланни палăрать.

Юлашки вăхăтра ку ĕçре лайăх организаторсемпе ертсе пыракансем палăрчĕç. Сăмахран, Кувакино райпромкомбинат директорне Жоров юлташа лайăх ĕçленĕшĕн РСФСР тата ЧАССР апат-çимĕç Халăх Комиссарĕсем премии панă.

Стахановецсемпе ударниксен хисепĕ те ӳссех пырать. Вĕсем ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн, производствăна лайăхлатассишĕн, продукци пахалăхне ӳстерессишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсен хушшинче Етĕрнери çу çапакан заводра олифа пĕçерекен мастер Ижанов юлташ, Кувакино райпищекомбинатĕнчи Липнягова юлташ, Çĕмĕрле арманĕнчи Курасов юлташ, Сĕнтĕрвăрри райпромкомбинатĕнчи А. П. Красильников, П. Б. Шевнин, Е. Куяшова юлташсем, Улатăр хулинчи промкомбинатри Л. И. Вагин, В. С. Юдин юлташсем, Караньялĕнчи «Труд» артельри Д. Г. Григорьев, А. Я. Яковлев юлташсем. Канашри «Первое мая» артельри Н. Грачев юлташ уйрăмăнах палăрса тăраççĕ.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, вырăнти промышленность, промысла тата инвалидсен кооперацийĕ кая юлса пырассине тĕппипех пĕтермен-ха. Тавар пахалăхĕ тĕлĕшпе те нумай ĕçлеме кирлĕ-ха. Сăмахран, кашăксене пирĕн сăрламасăрах туса кăлараççĕ, çавăн пирки кашăксем хăвăрт пăсăлаççĕ, çурăлаççĕ.

Малта пыракан апат-çимĕç предприятийĕсен опычĕ çакна кăтартса парать: подсобнăй хуçалăх хăйсен пулсан çеç артельсен ĕçĕ ăнса пырать. Апат-çимĕç базисем туни çав тери пăллă вырăн йышăнса тăрать пулин те, Кувакино районĕсĕр пуçне, нихăш районра та 1943 çулти çуркуннене тивĕçлипе хатĕрленмеççĕ. Район е хула совет исполкомĕсен сывăхри кунсенчех подсобнăй хуçалăхсем валли çĕр уйăрса парас ыйтăва татса памалла, вăрлăх тупма, ялхуçалăх инвентарĕ тупма пулăшмалла, ĕç планне çирĕплетсе вăл пурнăçа кĕнине тĕрĕслемелле.

Вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промкооперации артелĕсен ĕçне рабочисен, служащисен, артель членĕсен хастарлăхне çĕклемесĕр лайăхлатма пулмасть. ВКП(б) Обкомĕн XIII пленумĕн решенийĕсем ку тĕлĕшпе çителĕклĕ таран пурнăçа кĕрсе пымаççĕ-ха. Вырăнти тата кооперации промышленноçĕн рабочисен хушшинче хальхи вăхăтра массăллă ăнлантару ĕçне промышленноçăн ытти предприятийĕсенчи рабочисен хушшинчи пек те мар лайăхрах туса пымалла. Воспитани ĕçне вырăнти промышленность уйĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерессипе çыхăнтарса туса пымалла. Çак енчен илсен исполком ларăвĕсенче стахановецсемпе, инженерлатехникла работниксемпе пĕрле кашни уйăхрах социализмлă ăмăрту итогĕсене шута илесси пăллă вырăн йышăнса тăрать.

Парти пире çакна вĕрентет: социализмлă ăмăртăва ертсе пырасси ăна массăллă юхăм тумаллине пĕлтерет, хамăр умра тăракан йывăрлăхсене çĕнтерме халăх массисен творчествăллă хастарлăхне хăпартмаллине, пĕтĕм ĕçре учет тата контроль тăвассине, малта пыракансен опытне анлăн сарассине пĕлтерет. Социализмлă ăмăртăва мухтанса шавлассипе улăштарма юрамасть.

Районсен, наркоматсен, кооперации промышленноçĕн хăшпĕр ертсе пыракан работникĕсем партин çак кăтартăвĕсене манса каяççĕ, социализмлă ăмăртăва çителĕклĕн ертсе пымаççĕ.

1943 çулхи пĕрремĕш кварталта Чăваш республикинчи вырăнти тата кооперации промышленноçĕ хăйĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе хăшпĕр утăмсем турĕ. Малта пыракан предприятисемпе артельсен опычĕпе усă курса, уйрăм райпромкомбинатсемпе артельсем кая юлса пынине пĕтерсе, вĕсене малти вырăна кăлармалла. Çав тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕçсем тумалла.

Хатĕрленĕ чĕртазара тата вутта артельсен склачĕсене çитермелле; предприятисемпе артельсен подсобнăй хуçалăхĕсене çуракине хатĕрлемелле; вырăнти тата кооперации промышленноçĕнче ĕçлекенсене пурне те Май уйăхĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнтармалла; çирĕп ĕç дисциплини туса хурса, производствăра ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курмалла; плана пĕтĕмĕшпе кăна мар, ассортимент тăрăх та тултармалла.

Халĕ пирĕн пĕтĕм çĕршывĕпе Май уйăхĕнхи социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Кашни совет патриочĕ, вăл фронтра-и, тылра-и, кирек ăçта пулсан та, хăйĕн пĕтĕм вăйне тăшмана хăвăртрах аркатса тăкас, хамăр çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен тасатас ĕçе пама тăрăшать.

Май уйăхĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, йывăрлăхсене сирсе пырса, плана уйăхран уйăха тултарса пымалла тăвасси — партипе совет руководителĕсен чыслă ĕçĕ пулса тăрать.

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ.

Госбанкăн Чăваш республикинчи контори кредитнăй инспекторсем хатĕрлекен 3 уйăхлăх курс уçать

Курса вăтам шкулăн 7 класĕнчен кая мар вĕреннисене тата шут ĕçĕнче ĕçленисене йышăнаççĕ.

Курсантсене уйăхне 200 тенкĕрен пуçласа 300 тенке çити стипенди параççĕ, апат çитереççĕ, общежити параççĕ.

Заявленисене апрелĕн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлме пулать: Шупашкар, К. Маркс урамĕ, 25, кадрсен отделĕ, 9 сехетпе 14 сехет хушшинче ыйтса пĕлме пулать.

Госбанк конторинче ĕçлеме машинистка тата курьер кирлĕ.

Чувашлесзаг трестĕнче ĕçлеме вăрман хатĕрлес ĕçпе специалист, управделами тата грузовикпа çӳреме шофер кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Канаш урамĕ, 17.

—1

Шупашкарти энергетика техникумĕ,

Строительный техникум пулнăскер, çакăн çинчен пĕлтерет: техникума заявленисем памалли срока апрелĕн 20-мĕшĕччен тăснă, испытанисем апрелĕн 21-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Вĕренме илмелли условисене „Красная Чувашия" хаçатра мартăн 21-мĕшĕнче, „Чăваш Коммуни" хаçатра апрелĕн 7-мĕшĕнче пичетленĕ.

Дирекци.

Шупашкарти эрех комбинатне ялхуçалăхĕнче ялан ĕçлеме рабочисем кирлĕ. Пĕччеиисене общежити параççĕ, столовăй пур, кашнине хăйшĕн пахча-çимĕç лартса тума çĕр участокĕ параççĕ.

Чебторга икĕ старши бухгалтер тата подсобнăй хуçалăхра ĕçлеме рабочисем кирлĕ. Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Ленин урамĕ, 11-мĕш çурт. Чебторгăн кадрсен пайĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99 ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 671 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.